26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
12
ЮНКУН
9(6504) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Парти ретне ÿстерессишĕн куллен тимлĕн тăрăшмалла

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче пирĕн большевиксен партийĕ халăхпа татах та ытларах тăванланчĕ, ĕççыннисен анлă массипе татах та таччăнрах çыхăнчĕ. „Большевиксен партийĕ ертсе пынипе,— тенĕ Сталин юлташ,—пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсем тата интеллигенци хăйсем валли ирĕклĕх çĕнтерсе илчĕç, социализмлă общество туса хучĕç. Отечественнăй вăрçă кунĕсенче парти пирĕн умма фашистла захватчиксене хирĕç пĕтĕм халăх кĕрешĕвне хавхалантарса тата организацилесе пыраканни пулса тухса тăчĕ. Партин организаторла ĕçĕ совет çыннисен мĕнпур вăйне пĕр çĕре пĕтĕçтерсе, пĕр тĕллев патнелле ячĕ, хамăрăн мĕнпур вăйсемпе майсене тăшмана çапса аркатас ĕçе пăхăнтарчĕ".

Совет Союзĕнчи халăхсем Ленин—Сталин партийĕ çĕнтерÿсен организаторĕ пулса тăнине кураççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ совет çыннисем большевиксен партийĕ тавра таччăн пĕтĕçрĕç, çавăнпа ĕнтĕ вĕсем, Ленин—Сталин партине кĕрсе, хăйсен пурнăçне парти пурнăçĕпе çыхăнтарма тăрăшаççĕ. Иртнĕ 1943 çулта пирĕн республикăри парторганизаци 4.464 çынна парти ретне илнĕ. Ку хисеп, 1942 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут ытларах пулать.

Ленин—Сталин партине кĕрекен рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн вăй-хăвата шеллемесĕр кĕрешме, ĕçлеме, кирлĕ пулсан, хăйсен пурнăçне те пама хатĕр тăнине кăтартса параççĕ. Коммунистсен пахa ĕçĕсене кашни предприятире, колхозра, учреждενире йышлăн куратпăр. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри коммунистсем Офицеров, Дмитренко тата ытти нумай юлташсем тухăçлă ĕçĕн организаторĕсем пулса тăчĕç. Вĕсем иртнĕ çулта хăйсем виçĕ-тăватă çулхи плана тултарнă кăна мар, ытти нумай рабочисене стахановла ĕçлеме вĕрентнĕ. Колхоз производствинче вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлекен коммунистсене те нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах та парти ретне илес тĕлĕшпе пур парторганизацисем те тикĕс те лайăх ĕçлеççĕ теме çук-ха. ВКП(б) Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ XVII-мĕш пленумĕ, «1943 çулта ВКП(б) ретне илнин итогĕсем çинчен» сÿтсе-явса, уйрăм парторганизацисем партие çĕнĕ çынсем илес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлеменнине палăртрĕ. ВКП(б) райкомĕсенчен хăшпĕрисем ĕççыннисен патриотла çĕкленĕвĕпе кирлĕ пек усă курман, партие çĕнĕ çынсем илес ĕçе тивĕçлипе организацилемен, ĕççыннисем хушшинче партиллĕ-массăллă ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Вĕсем ВКП(б) Центральный Комитечĕ малта пыракан çынсене партие суйласа илесси пирки кăтартса панине кирлĕ пек пурнăçа кĕртмеççĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕнче республикăри промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсен хисепĕ чылай ÿсрĕ. Социализмлă ялхуçалăхĕнче те малта пыракан работниксем йышлăн палăрчĕç. Апла пулин те парти организацийĕсем, пуринчен ытла, служащисен шутĕнчен ÿссе пынă. ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсем парторганизацисен составне лайăхлатас ыйту çине çителĕксĕр çаврăнса пăхаççĕ. Вĕсем рабочисемпе колхозниксене тата трактористсемпе комбайнерсене парти ретне илесси мĕншĕн сÿрĕк пынине тĕпĕшпех тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Хуласенчи парторганизацисен ĕçĕнчи тепĕр çитменлĕх вăл—пысăк мар предприятисенче парторганизацисем сахал ÿсни пулать. Вырăнти промышленноçри, вăрман промышленноçĕнчи тата промысла коопераци артелĕсенчи работниксем хушшинче партиллĕ-политикăллă ĕçе пачах та çителĕксĕр организациленĕ. ВКП(б) горкомĕсен работникĕсем вăл предприятисенче сахал пулаççĕ, унти коммунистсене кулленхи ĕçре тивĕçлĕ пулăшу параççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ хăшпĕр райкомсем малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене парти ретне илес тата ялти организацисене тĕреклетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ.

Хăшпĕр парторганизацисенче çынсене ВКП(б) ретне уйрăмăн суйласа илес йĕркесене пăснисем те пулнă. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ райкомсемпе горкомсене партие кĕме панă заявленисене вăхăтра пăхса тухса, парти документсене срокра пама кирлине кăтартса пачĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ хăшпĕр райкомсемпе горкомсем парти кандидачĕсен политикăлла пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр кандидатсем вăхăтра члена куçаймаççĕ.

Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ—хуçалăхри ĕçре çитĕнÿсем гăвасси партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе лайăх йĕркеленинчен килет, тесе вĕрентет.

ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен тата пуçламĕш парторганизацисен çав кăтартăва кулленхи ĕçĕн никĕсне хумалла. Партиллĕ-организациллĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçе большевикла организацилесе, ВКП(б) ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле. Парти ретне çĕнĕ çынсем илнĕ чухне малта пыракан, ĕçре тĕрĕсленнĕ тата шанчăклă çынсене суйласа илес йĕркесене çирĕп тытса пымалла. Уйрăмăнах рабочисемпе трактористсене тата комбайнерсене парти ретне илес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлес пулать. Пысăк мар предприятисенче парторганизацисем туса, вĕсене тĕреклетсех пымалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти райкомĕсене колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăллă ĕçе лайăхлатса, вĕсене парти ретне илессине лайăхлатма хушса хăварчĕ. Ялсенче çĕнĕрен пуçламĕш парторганизацисем организацилемелле. Вĕсен ĕçне большевикла йĕркелеме пулăшмалла. Парти ретне чи лайăх хĕрарăмсене тата комсомолецсене илесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Вĕсене ертсе пырас ĕçсене хăюллăнрах куçармалла.

Парти речĕ ÿссе пыни партиллĕ организациллĕ ĕçе тата çамрăк коммунистсене воспитани парассине тĕпренех лайăхлатма хушать ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен кандидатсене большевикла воспитани парассишĕн куллен тимлĕн тăрăшмалла, вĕсене партипе общественнăй ĕçе активлăн явăçтармалла. Пуçламĕш парторганизаци руководителĕсен коммунистсем хăйсен пĕлĕвĕсене мĕнле ÿстерсе пынине сăнаса пымалла, вĕсене парти ĕçне анлăн явăçтармалла. Парторганизаци панă поручениcене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăмалла. Пĕччен коммунистсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла. Коммунистсен пухăвĕсене тĕплĕн хатĕрленсе ирттерес пулать. Пухусенче парти пурнăçĕн ыйтăвĕсене ытларах сÿтсе-явмалла. ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсем парти активĕн пухăвĕсене вăхăтра тата лайăх ирттерессине организацилеме тивĕçлĕ. Партин районри тата хулари активĕн пухăвĕсем кашни икĕ уйăхра пĕр хутран кая мар пулса иртмелле. Вăл пухусенче районри, хулари парторганизацисен пурнăçĕнчи ыйтусене сÿтсе-явмалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ райкомсемпе горкомсене пуçламĕш парторганизацисене ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатма хушса хăварчĕ. Пуçламĕш парторганизацисен предприятисемпе колхозсен, учрежденисен пурнăçĕпе ытларах интересленмелле, партипе государство дисциплинине тата коммунистсене политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

Парти райкомĕсемпе горкомĕсен тата пуçламĕш парторганизацисен ВКП(б) Обкомĕн XVII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене большевикла пурнăçа кĕртсе пырса, ВКП(б) ретне ÿстерес тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнÿсем тумалла, парторганизацисен организаторла вырăнне татах та ытларах çирĕплетмелле.

РСФСР Наркомпросĕ пухакан пĕтĕм Российĕри канашлу

1944 çулхи январĕн 25-мĕшĕпе 31-мĕшĕ хушшинче РСФСР Наркомпросĕ Мускавра облаçсемпе крайсенчи çутĕç пайĕсен шкул секторĕсен заведующийĕсен тата пуçламĕшпе вăтам шкул управленийĕсен начальникĕсен пĕтĕм Российĕри канашлăвне пухать. Канашлура РСФСР Наркомпросĕн пуçламĕшпе вăтам шкул управленийĕн начальникĕ Парфенова юлташ шкулсемпе учительсен ĕçне лайăхрах тĕрĕслесе тăрасси çинчен тата ачасен пĕлĕвне пахалас ĕçе йĕркелесси çинчен доклад туса парать, содокладсем те пулаççĕ. (ТАСС).

Туркменистанра çурхи пуçланнă

Ашхабад облаçĕнчи колхозсем, лайăх çанталăк тăнипе усă курса, ир акакан çурхи тĕштырăсене акма пуçланă. Январь уйăхĕн пĕрремĕш эрни хушшинче 2.270 гектар тулăпа урпа акнă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступлени туса пырса, Ровно облаçĕнчи БЕРЕЗНО тата ЛЮДВИПОЛЬ ятлă район центрĕсене, Житомир облаçĕнчи ЛЮБАР ятлă район центрне, Винница облаçĕнчи ВОРОНОВИЦА, НЕМИРОВ ятлă район центрĕсене, Киев облаçĕнчи МАНЬКОВКА ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра — ГЛЕЗНА, ВЕЛИКИЕ ДЕРЕВИЧИ, СТРИЖЕВКА, КОВАЛЕНКИ, МОТРУНКИ, ПОЛЕВАЯ СЛОБОДКА, ПОДОРОЖНА, КРАПИВНА, ФРИДРОВО, ЮРОВКА, ВОЛЧИНЕЦ, ЧЕРНИЧКИ, КОМАРОВ, СТЕПАНОВКА, БАЙРАКОВКА, ХВОСТОВЦЫ, ЯРЫ, БАНДУРОВКА, КРАСНЕНЬКОЕ, ПОДВЫСОКОЕ, ВЛАДИСЛАВЧИК, ПОПОВКА, КОМЕЛА, СОКОЛОВКА, НЕСТЕРОВКА, ИВАНОВКА, ПОДОБНА, КРАЧКОВКА ятлă пысăк ялсене тата ЯРОВАТКА ятлă чугун çул станцине йышăнса илнĕ. СМЕЛАПА ХРИСТИНОВКА хушшинчи чугун çула пирĕн çарсем татнă.

Пирĕн çарсем КИРОВОГРАДРАН çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре наступлени туса пынă, Кировоград облаçĕнчи КАМЕНКА-ШЕВЧЕНКОВСКАЯ ятлă район центрне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла çапăçса йышăнса илнĕ, çав шутра МАЛЫЙ БУЗУКОВ, ГОЛОВЯТИНО, СУНКИ, ПЛИСКАЧЕВКА, ЗАВАДОВКА, МИХАЙЛОВКА, ГРУШЕВКА, РЕБЕДАЙЛОВКА, ПЛЯКОВКА, ТОМАШЕВКА, БОНДЫРЕВО, СТАВИДЛО, ШПАНОВО, СЕНТОВО, АБРАМОВКА, АЛЕКСЕЕВКА ятлă пысăк ялсене тата КАМЕНКА ятлă чугун çул станцине йышăнса илнĕ.

КИРОВОГРАДРАН çурçĕртерехри районра нимĕçсен çапса аркатнă виçĕ танковăй, пĕр моторизованнăй тата пĕр пехотнăй дивизийĕсен юлашкийĕсене çавăрса илнĕ. Парăнма килĕшмен пирки, пирĕн çарсем вĕсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă пĕчĕк ушкăнĕсем çеç тарса саланма пултарнă. Çав районра пирĕн çарсем нимĕçсенчен 90 танк, тĕрлĕ калибрлă 114 тупă (вĕсенчен 26-шĕ хăй тĕллĕн çÿрекеннисем), 124 миномет, 287 пулемет тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 8.000 вилли ытла выртса юлнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, артиллерипе минометсенчен персе тăнă, темиçе пунктра тĕлĕ-тĕлĕпе çапăçнă.

Январĕн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем фронтăн мĕнпур участокĕсенче нимĕçсен 58 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 32 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăçĕсем, ăнăçлăн малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта, çав шутра Ровно облаçĕнчи Березно тата Людвиполь ятлă район центрĕсене тытса илнĕ. Пĕр опорнăй пунктшăн пынă çапăçура пирĕн боецсем Ровно облаçĕнчи партизан отрячĕпе пĕрле нимĕç пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă, 12 тупă тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ. Гитлеровецсен икĕ ротине тыткăна илнĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн Житомир облаçĕнчи Любар ятлă район центрне, ахаль çулсен питĕ кирлĕ узелĕ пулса тăраканскере, тытса илнĕ. Тăшман хăйĕн çав районри позицийĕсене каялла тытса илес тесе, темиçе хут та хаяр контратакăсем тунă, анчах ăна, пысăк çухату тÿстерсе, каялла сирсе янă.

Пирĕн çарсем, кăнтăралла наступлени туса пырса, Киев облаçĕнчи Маньковка ятлă район центрне, Винница облаçĕнчи Вороновица тата Немиров ятлă район центрĕсене тытса илнĕ. Яроватка станцине тытса илнипе совет çарĕсем нимĕçсен питĕ кирлĕ чугун çулне—Смелапа Христиновка хушшинчи чугун çула татнă. Кун каçиччен нимĕçсен 4.000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 30 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем нумай тытса илнĕ. Тата нумай сынна тыткăна илнĕ.

* * *

Кировоградран çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшман çарĕсен ушкăнне çавăрса илнĕ. Çав ушкăн нимĕçсен аркатса тăкнă виçĕ танковăй, пĕр моторизованнăй тата пĕр пехотнăй дивизийĕсен юлашкийĕсенчен тăнă. Çавăрса илнĕ ункăран тухса каяс тесе, нимĕçсем 3 кун хушшинче питĕ хаяр контратакăсем тунă, анчах та вĕсене кашни хутĕнчех каялла хăваласа янă, çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе пин виллиь выртса-выртса юлнă. Паян пирĕн çарсем парăнма килĕшмен тăшмана вăйлăн пырса çапнă та нимĕç çарĕсен çавăрса илнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкнă.

Малалла наступлени туса пырса, совет çарĕсем Кировоград облаçĕнчи Каменка-Шевченковская ятлă район центрне тытса илнĕ тата халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăнса илнĕ. Пĕр соединени чăçĕсем Кировоград хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕç пехотине пĕр полк таран вĕлерсе пĕтернĕ, 27 танкне, хăй тĕллĕн çÿрекен 3 туппине тата 14 бронетранспортерне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсем хушшинче 48 тупă, автомашинăсем нумай тата пысăк складсем пур. Нумай сынна тыткăна илнĕ.

* * *

Одесса облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен фронта каякан икĕ çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 200 гитлеровеца çити вилнĕ е аманнă. Чугун çулăн çав участокĕнче вара поездсем пĕр талăк хушши çÿреймен. Молдави партизанĕсен пĕр ушкăнĕ чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă, противотанковăй пăшалсемпе персе, 4 паровоза юрăхсăра кăларнă.

* * *

Пирĕн çарсем тытса илнĕ нимĕç документĕсем хушшинче нимĕçсен 8-мĕш армийĕн командованийĕ 1943 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче нимĕçсен XI-мĕш армейски корпусĕн командованине панă 1.930—43 номер приказа тупнă. Çав документра çапла каланă: «Карловкăна çĕмĕрме хатĕрленес ĕçсене кĕперсем тăвакан 407-мĕш моторизованнăй батальонăн 2-мĕш ротин командирĕ Клинг капитан ертсе пырать, вăл хăйĕн командипе пĕрле Карловкăн хĕвелтухăç хĕрринчи кĕпертен çурçĕртерехе пырса тăнă ĕнтĕ. Карловкăна ишмелли приказа XI-мĕш армейски корпусăн командованийĕ памалла». Çав документ çинче XI-мĕш армейски корпусăн командующийĕн Раус генералăн çакăн пек резолюцийĕ пур: «Инженери службин начальникне: ишмелли плана вăхăтра тăратма ыйтатăп. Раус».

Германи çарĕн аслă начальникĕсем ишĕлтерме тăрăшнă Карловка мĕн-хз вăл? Карловка вăл—ял. Полтава облаçĕнчи район центрĕ. Унăн çыннисем çĕр ĕçлесе пурăнаççĕ. Çав ялта çар объекчĕсем пулман та, çук та. Нимĕç генералĕ çапла ĕнтĕ çав ялти мирлĕ çынсен çуртĕсене çунтарса яма хушнă. Калас пулать, нимĕç генералĕсем вăрă-хурахла плансене çирĕплетеççĕ çеç мар, преступлени тума хушакан приказсем кăлараççĕ çеç мар. Сăмахран, акă, нимĕçсен 106-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ Форст генерал хăйĕн салтакĕсене мирлĕ совет гражданĕсен çуртĕсене мĕнле çунтармаллине хăй кăтартса панă. Тыткăна лекнĕ оберефрейтор Карл Буккем çапла каласа панă: «106-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ Форст генерал-лейтенант хĕрарăмсемпе ачасем пурăннă çурта вут тĕртнине эпĕ хам куртăм. Çавăн хыççăн Форст вара салтаксене ытти çуртсене çунтарса яма хушрĕ».

Вăхăт çитĕ, Рауспа Форст генералсене, Гитлерăн ытти вăрă-хурахĕсене те, айăпланакансен сакки çине ларттарĕç. Ун чухне вара вĕсем совет çĕрĕ çинче хăйсем тунă мĕнпур тискер ĕçсемшĕн ответ тытĕç.

Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен Совет Правительстви калани

ТАСС пĕлтерни

Совет Правительстви ТАСС-а çакăн пек калама полномочи панă:

Январĕн 5-мĕшĕнче Лондонра Совет Союзĕпе Польша хушшинчи çыхăнусем çинчен Польшăн эмиграцире пурăнакан правительстви калани пичетленсе кăларнă. Çав сăмахсенче тĕрĕс мар каланисем пур, унта Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ çинчен те тĕрĕс мар калани пур. Çакна пурте пĕлеççĕ: Совет Конституцийĕ Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикке Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссин халăхĕсем ыйтнă пек тунă, çавăн пек тăвасшăн пулнине çав халăхсем 1939 çулта анлă демократиллĕ йĕркепе туса ирттернĕ плебисцитра кăтартса панă. Çапла вара Хĕвеланăç Украинăн территорийĕсем (унта пуринчен ытла украинецсем пурăнаççĕ) Совет Украинине кĕнĕ, Хĕвеланăç Белоруссин территорийĕсем (унта пуринчен ытла белоруссем пурăнаççĕ) Совет Белоруссине кĕнĕ. Ригăра 1921 çулта тунă договор, Совет Союзне ирĕксĕр йышăнтарнăскер, Хĕвеланăç Украинăра пурăнакан украинецсем тĕлĕшпе тата Хĕвеланăç Белоруссире пурăнакан белоруссем тĕлĕшпе тĕрĕс мар тунине çапла вара тÿрлетнĕ. Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белорусси Совет Союзне кĕни Польшăн интересĕсене пăсман çеç мар, вăл, йăлтах урăхла, поляк халăхне хăйĕн кÿршĕ халăхĕсемпе — украинец, белорусс тата вырăс халăхĕсемпе яланах туслăн пурăнмашкăн шанчăклă никĕс туса панă.

Совет Правительстви темиçе хут та çапла каласа панă: вăл вăйлă та никама пăхăнман Польша туса хурассишĕн тата Совет Союзĕпе Польшăна пĕр-пĕринпе туслăн пурăнтарассишĕн тăрăшать. Совет Правительстви халь тепĕр хут çапла калать: вăл Совет Союзĕпе Польша хушшинче туслăх тума тăрăшать, çав туслăха ăна пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнас, пĕр-пĕрне хисеплесе тăрас тата, поляк халăхĕ кăмăл тăвать пулсан, Совет Союзĕпе Польшăн чи пысăк тăшманĕ пулса тăракан нимĕçсене хирĕç кĕрешме пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли союз тăвас йĕркепе тумалла. Совет Союзĕпе Чехословаки пĕр-пĕринпе туслăн пурăнасси, пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси тата вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен тунă договор çумне Польша хутшăнни çав задачăна пурнăçлама пулăшнă сулăчче.

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче совет çарĕсем тăвакан çитĕнÿсем Совет Союзĕн оккупациленĕ территорийĕсене Германи захватчикĕсенчен ирĕке кăларассине кунсерен хăвăртлатса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр кĕрешни тата пирĕн союзниксен вăрçă ĕçĕсем сарăлса пыни Гитлерăн çар машинине аркатса тăкас сехете çывхартаççĕ, Польшăна тата ытти халăхсене те Германи оккупанчĕсен пусмăрĕнчен хăтараççĕ. Ирĕке кăларассишĕн пыракан çак кĕрешÿре «Совет Союзĕнчи поляк патриочĕсен союзĕ» тата вăл тунă поляксен армейски корпусĕ, фронтра Хĕрлĕ Çарпа аллă-аллăн тытăнса нимĕçсене хирĕç кĕрешекенскер, хăйсен çапла задачисене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ те ĕнтĕ.

Халĕ ĕнтĕ Польшăна вăйлă та никама пăхăнман государство туса хума майсем пулса тăраççĕ. Анчах та Польшăн украинецсемпе белоруссен çĕрĕсене тытса илнипе мар, нимĕçсем Польшăран туртса илнĕ çĕрсене, ĕмĕрех поляк çĕрĕсем пулнăскерсене, çĕнĕрен хăй çумне хутшăнтарнипе ура çине тăмалла. Çапла тусассăн çеç поляк, украинец, белорусс тата вырăс халăхĕсене пĕр-пĕрне шанса, пĕр-пĕринпе туслăн пурăнтарма май пулать. Польшăн хĕвелтухăç енчи чиккисене Совет Союзĕпе килĕшсе тума пулать. Совет Правительстви 1939 çулта тунă чикĕсене улăштарма юраман чикĕсем тесе шутламасть. Çав чикке Польша майлă улăштарма пулать,—поляк халăхĕ пуринчен йышлăрах пурăнакан районсене Польшăна пама пулать. Çапла тусассăн, Совет Союзĕпе Польша хушшинчи чикĕ Керзон линийĕ текен лини тăрăх кайма пултарнă пулĕччĕ; çав линие ăна 1919 çулта Союзлă Державăсен Верховный Совечĕ йышăннă; çав лини тăрăх Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белорусси Совет Союзне кĕмелле. Польшăн хĕвеланăç енчи чиккисене аяккарах куçармалла, Германие ĕлĕкрех туртса илнĕ поляк çĕрĕсене Польша çумне хутшăнтармалла. Çапла тумасăр пĕтĕм поляк халăхне хăйĕн государствинче пĕрлештерме май çук. Çапла тусассăн, Польша Балтика тинĕсĕ патне тухма та май илет. Поляк халăхĕ вăйлă та никама пăхăнман государствăра пĕрлешме тăрăшнине йышăнса пулăшмалла.

Польшăн эмиграцире пурăнакан правительстви, хăйĕн халăхĕнчен татăлса кайнăскер, Совет Союзĕпе килĕштерсе пурăнмалла тума пултараймарĕ. Вăл тата Польшăра Германи захватчикĕсене хирĕç активлăн кĕрешес ĕçе те организацилеме пултараймарĕ. Ку çеç те мар,—тĕрĕс мар политика тытса пынипе вăл час-часах нимĕç оккупанчĕсене пулăшать. Тĕрĕссипе илсен, Польшăпа Совет Союзĕн задачи —пирĕн çĕршывсем хушшинче туслă та çирĕп çыхăнусем тăвасси, Польшăпа Совет Союзĕн халăхĕсем хăйсен тулашри тăшманне хирĕç кĕрешес ĕçре пĕрлешесси пулса тăрать, мĕнпур союзниксен пĕрлехи ĕçĕ çавăн пек тума хушать.

Нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсене пулăшаççĕ

КАНАШ, январĕн 7-мĕшĕ. (Телефонпа). Асхвари «Красное пламя» колхозра ĕнер колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура Отечественнăй аслă вăрçă инваличĕ Сергеев юлташ нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшасси çинчен тĕплĕн каласа пачĕ. Пухура чылай колхозниксемпе колхозницăсем тухса калаçрĕç.

Пуху, пĕр кăмăллă пулса, нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене пулăшма 4 лаша, 4 ĕне, 10 сысна, 4 сурăх ярса пама йышăнчĕ.

Çавăн пекех Катекри Киров ячĕпе тăракан колхоз та 5 лаша, 2 пăру, 2 ĕне, 10 сысна тата 8 сурăх ярать. «Комсомолец» колхозăн членĕсем 3 лаша, 4 ĕне, 5 сысна, 5 сурăх ярса пама йышăннă. Выльăхсене пурне те чи мăнтăррисене яраççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăн 5-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем хăшпĕр вырăнсенче çĕнĕрен малалла куçнă, пĕр пунктра виçĕ километра яхăн куçнă. Тăшман вырнаçнă çĕрте пуç пулса тăракан тата икĕ высотăна йышăнса илнĕ. Англин 8-мĕш армийĕн секторĕнче çĕнни нимĕнех те палăрман.

Союзниксен авиацийĕ январĕн 9-мĕшĕнче Пола хулинчи чугун çул объекчĕсемпе порта тапăннă. Кунсăр пуçне Анконăри гаваньпе чугун çул сооруженийĕсене атакăланă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Анкона вăл Адриатика тинĕсĕ хĕрринче пысăк тинĕс-çар бази пулса тăрать. Фронт линийĕнчен Анкона 100 миля çурçĕртерехре ларать. Çавăн пекех Анкона чугун çулсемпе шоссе çулĕсен тата аэродромсен паллă центрĕ шутланать. Адриатика тинĕсĕн çурçĕр-хĕвелтухăç енче вырнаçнă Пола порчĕ Италин тинĕс-çар флочĕн бази шутланнă. Халĕ вăл тăшманăн гидросамолечĕсемпе подводнăй лодкисен бази пулса тăрать.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГЕРМАНИЕ ЮТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕН ИРĔКСĔР ХĂВАЛАСА ПЫНА РАБОЧИСЕНЧЕН ХĂРАÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Германире оккупациленĕ тĕрлĕ çĕршывсенчен хăваласа пынă темиçе миллион рабочи пурри Германишĕн хăрушă пулса тăни çинчен гитлерла хаçатсем нимĕçсене час-часах асăрхаттараççĕ.

Хаçатсем нимĕçсене—çав рабочисене «пĕртте ан ĕненĕр», тесе чĕнеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем гитлерла Германие курайман çынсем пулса тăраççĕ, теççĕ.

Хаçатсем «хĕвелтухăçĕнчен килнĕ рабочисем» (гитлеровецсем Германие каторгăна ирĕксĕр хăваласа кайнă совет çыннисене—арçынсемпе хĕрарăмсене тата ачасене çапла чĕнеççĕ) Германишĕн уйрăмах хăрушă пулса тăни çинчен çыраççĕ. «Данцигер Форпостен» ятлă хаçат каланă тăрăх, çав рабочисем вĕсем—«фанатиксем», урăхла каласан, хăйсен тăван çĕршывне юратакан çынсем пулса тăраççĕ. Çавăнпа гитлеровецсен хаçачĕ нимĕçсене ют çĕршыв рабочийĕсене шеллеме хушмасть.

ÇИТЕС ÇУРАКИНЕ КĂТАРТУЛЛĂН ХАТĔРЛĔНЕР

Пирĕн республикăри колхозсем 1943 çулта начар мар ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çарăн çитех те чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавасланса, колхозниксемпе колхозницăсем мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пĕтерчĕç, государствăна тырă памалли плана срокчен пурнăçларĕç, унсăр пуçне 1944 çулшăн аванс шучĕпе натуроплата тата Хĕрлĕ Çар фондне 105.000 пăт тырă парса хучĕç. Сталин юлташăн Октябрьти социализмлă аслă революци 26 çул тултарни çинчен тунă историллĕ докладне ответлесе, Чăваш республикинчи колхозсемпе колхозниксем вунă кун хушшинче государствăна 2.500.000 пăт тырă сутрĕç, ăна январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех хатĕрлев пункчĕсене леçсе пачĕç. Республикăри колхозсем çавăн пекех выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана та ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕç.

Районсемпе МТС-сен тата колхозсен руководителĕсем умĕнче халь питех те ответлă задача — 1944 çулхи çуракине вăхăтра хатĕрленсе, ăна йĕркеллĕ туса ирттересси тăрать.

Çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх хатĕрлесси пысăк вырăн йышăнать. Партипе правительство çак ĕçе питех те пысăка хурса хаклаççĕ. ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире колхозсене вăрлăх участокĕсем уйăрса хума кирлине, вăл участоксене кашни йышши тырă тăрăхах мĕн чухлĕ уйăрмаллине кăтартса пачĕç. Колхозсене çав участоксенчен пухса илнĕ тырпула государствăна тырă парса татиччен вăрлăх валли хывма ирĕк панă. Пирĕн республикăри колхозсенчен нумайĕшĕсем вăрлăх участокĕсенчен, ахаль участоксемпе танлаштарсан, 1,5—2 хут тухăçлăрах тырпул туса илчĕç. Колхозсен пысăк пайĕ вăрлăх участокĕсенчи тырпула вăхăтра пухса кĕртнĕ, ăна уйрăмăн çапса вăрлăх фончĕсене хывнă. Çавна пула Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Шăхасан районĕсенчи колхозсем тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене хăйсем валли çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хучĕç. Етĕрне тата Тăвай районĕсем те кĕçех вăрлăх фончĕсене хывса çитереççĕ.

Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, тĕштырă тата пăрça йышши культурăсен вăрлăхĕсене хывмалли плана пурнăçа кĕртеймен-ха. Ку ĕçре уйрăмах Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Комсомольски тата Канаш районĕсем юлса пыраççĕ.

Вăрлăх сортлас тата ăна вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисенче сăнас ĕçсем те питĕ сӳрĕккĕн пулса пыраççĕ-ха. Советски, Хĕрлĕ Чутай, Канаш районĕсенче хывнă вăрлăхăн 40 процентне çеç сортланă.

Çĕрулми вăрлăхĕ хывас ĕç Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски, Пăрачкав, Канаш, Елчĕк, Улатăр районĕсенче пачах çителĕксĕр пулса пырать. Çĕрулми вăрлăхĕн запасне ӳстермелли майсемпе—çĕрулми тăррине вăрлăхлăх касса хатĕрлес майсемпе начар усă кураççĕ.

Сăнанă тăрăх, пирĕн республикăра «лорх» сортлă çĕрулми тухăçлă çитĕнет. Унăн тути те лайăх, тата çамрăк сорт пулнипе вăл ытти çĕрулмисенчен сахалтарах чирлесе пăсăлать. Вăрмар районĕнчи колхозсем, йăлтах «лорх» сортлă çĕрулми лартса хăварса, 1943 çулта республикăра чи тухăçлă çĕрулми туса илчĕç. Çак сортлă çĕрулмине лартас ĕç Вăрнар, Иншей, Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Октябрьски, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенчи колхозсенче те анлăн саралнă, вĕсем çĕрулмин тухăçлăхне çулран çулах ӳстерсе пыраççĕ. Çавăнпа та пирĕн республикăри колхозсен пурин те «лорх» сортлă çĕрулми лартма тытăнмалла. 1944 çулта «лорх» сортлă çĕрулми вăрлăхне ытти сортлă çĕрулмисен вăрлăхĕпе улăштарса лартас пулать. Вăрлăх участокĕсенче «лорх» сортлă çĕрулми кăна лартса хăвармалла тăвас пулать. Анчах пур колхозсем те мар-ха çак сортăн пахалăхне ăнланса илнĕ, сортлă çĕрулми вăрлăхне улăштарас ĕç вăраххăн пулса пырать.

Улатăр, Кувакино районĕсенчи колхозсенче йĕтĕн вăрлăхĕ хывас ĕç питех те юлса пырать. Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски, Сĕнтĕрвăрри, Канаш тата Шăмăршă районĕсенче кантăр вăрлăхĕ хывас ĕçе те вăраха тăсса пыраççĕ.

Çак районсен руководителĕсен çывăх вăхăтрах тĕштырăсемпе пăрçа йышши тырăсен, техникăллă культурăсен, çĕрулмипе нумай çул хушши ӳсекен курăксен вăрлăхĕсене пĕтĕмĕшпех хывса çитермелле тăвас пулать. Çавăн пекех тымар-çимĕç тата пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсене те çураки валли çителĕклĕ таранах хатĕрлесе е сутăн илсе хурас пулать. Вăрлăхсене мĕнле сыхласа усранине тăтăшах тĕплĕн контроллесе тăмалла. Вăрлăхсене пăсăлма тата вăрлама памалла мар. Вăрлăхсене пĕтĕмĕшпех тасатса, сортласа, акма юрăхлă кондицие çитерсе хумалла. Çавăнпа вăхăта пĕр кун та çухатмасăр пур колхозсенче те вăрлăх тасатма ятарласа звеносем уйăрмалла, вăрлăх тасатмалли машинăсемпе анлăн усă курмалла, ку ĕçе малтанах тĕплĕн шутласа тунă графикпе туса пымалла. Кантăр, вир тата ытти хăшпĕр культурăсене тасатас ĕçре çаврака аласемпе сарлакан усă курмалла. Кашни колхозăн халех вăрлăхсен шăтас пахалăхне, тасалăхне, нӳрлĕхне вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисенче тĕрĕслеттермелле, начар вăрлăхсене паха вăрлăхпа улăштарас ĕçе организацилемелле. Вăрлăха колхозсем хушшинче улăштарас ĕçе сарса ямалла, çапла вара кашни колхоз çураки тĕлне лайăх пахалăхлă вăрлăх çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хума пултартăр.

Лайăх пахалăхлă вăрлăх фончĕсене туни вăл—1944 çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешмелли чи кирлĕ мероприяти. Çавăнпа кашни колхозах вăрлăхлă тăвассишĕн райсовет исполкомĕсен председателĕсемпе парти райкомĕсен секретарĕсен хăйсен тӳрремĕнех ĕçлес пулать, вăрлăхсене мĕнле сыхласа усранине пур çĕрте те тĕрĕслес ĕçе организацилемелле. Палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле, вăрлăх фончĕсене тирпейсĕр сыхласа усракансене ответ тыттармалла.

Тухăçлă тырпул туса илесси агротехникăллă мероприятисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнинчен те нумай килет. Вăрнар, Советски, Элĕк, Шупашкар районĕсенчи тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсем иртнĕ çул агротехникăллă мероприятисене пурне те çине тăрса пурнăçласа пычĕç, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç.

Анчах кăçал чылай районсенче агротехникăн хĕллехи мероприятийĕсене çителĕксĕр пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Уя тислĕк кăларас, кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас ĕçсем чăтма çук хуллен пулса пыраççĕ, çĕре çемçетес ĕç валли торф хатĕрлесе турттармалли плана пурнăçа кĕртмесĕр хăварнă. Вырăнти удобренисемпе усă курас ĕç вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре халь питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен республикăри колхозсем минераллă удобренисем илсе тăмаççĕ.

Çак хĕлри агротехникăллă мероприятисене—тислĕк, çĕре çемçетмелли торф, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлесе турттармалли плансене тата хире юр тытса хăвармалли плана кашни колхозăн кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртес пулать.

Хăшпĕр районсенче çĕре çемçетнĕ çĕрте торфпа пачах та усă курмаççĕ. Шăмăршă, Çĕрпӳ тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче, сăмахран, торф кăлармалли вырăнсем ытла та нумай пулин те, 1943 çулта хире пĕр тонна торф та кăларман. Çĕре çемçетнĕ çĕрте торфпа усă курассине хакламаннине халех пĕтерес пулать.

Ялхуçалăхĕнчи стахановецсем калчасем ӳснĕ вăхăтра вĕсене апат параççĕ. Çак меслет вăл тырпул тухăçлăхне ӳстерме нумай пулăшать. Кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак питех те хаклă удобренине пухас тĕлĕшпе ялти комсомолецсем, пионерсем, шкул ачисем пысăк ĕç тума пултараççĕ, вĕсене организацилесе ертсе пырас пулать кăна.

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре хире юр тытса хăварасси паллă вырăн йышăнса тăрать. Юр тытса хăварни кĕрхи тырăсен тата нумай çул хушши ӳсекен курăксен калчисене сивĕрен хăтарать, тăпра ăшĕнче нӳрлĕх ытларах тытса хăварма, çуркунне юр ирĕлнĕ тапхăрта çурхи шывсене ытларах тытса юлма пулăшать.

Юр тытса хăварас ĕç пирĕн республикăра уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен пирĕн республикăн уйхирĕсем тикĕс мар, çавăн пирки юр хиртен çырмасене юхса тулать, калчасем çаралса юлаççĕ.

Халĕ юр тытса хăвармалли чи лайăх вăхăт. Çавăнпа юр тытмалли щитсене халех хатĕрлесе хире кăларса лартмалла, юр ытларах тытса хăварас шутпа щитсене, çапăсене тата хыр лăссисене чи малтан юр сахалтарах выртакан кĕрхи тулă калчисем çине пăрахса тухмалла. Иртнĕ кĕркунне çăмăр сахал çурĕ, çĕр типсе юлчĕ. Çавăнпа кĕрхи тырăсем акнă вырăнта кăна мар, çурхи тырăсем акмалли хирсенче те юр тытса хăварас пулать.

Юлашки çулсенче пирĕн республикăра пĕрчĕллĕ тырăсене кăмпа чирĕнчен тасатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Анчах 1943 çулхи çуркунне хăшпĕр колхозсем вăрлăхсене имçамсемпе çумасăр акнисем пулнă, çавăн пирки сĕлĕ, вир, тулă тата ытти хăшпĕр культурăсем кăмпа чирĕпе ытларах чирлерĕç. Çитес çуркунне вăрлăха имçамсемпе çумасăр акма шутлакансемпе татăклăн кĕрешмелле. Вăрлăх участокĕсем çине акма палăртнă çурхи тулă тата урпа вăрлăхĕсене йăлтах термически майпа чӳхемелле, ытти пĕрчĕллĕ культурăсен вăрлăхĕсене пурне те химиллĕ майпа чӳхесе акмалла. Çавăнпа та вăрлăхсем чӳхемелли мĕнпур инвентаре халех юсаса хумалла, çак ĕç валли çуртсем тата химизаторсем çителĕклĕ таранах хатĕрлемелле, вăрлăх чӳхемелли имçамсем çук пулсан, вĕсем вырăнне вырăнта тупнă ытти имçамсемпе усă курмалла.

А. МАТВЕЕВ

Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ

1944 çулхи çуркунне пирĕн пĕрчĕллĕ культурăсем акмалли лаптăкăн 40—50 процентне, çĕрулми акмалли лаптăкăн 20—30 процентне яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăварас пулать. Çак ĕçе туса ирттерме курссенче яровизаторсем хатĕрлемелле; кашни колхозрах лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ яровизатор, яровизаци тумалли çурт тата инвентарь шутлатăр.

Малта пыракан хуçалăхсен опычĕ çакна кăтартса пачĕ: культура тĕлĕшпе лайăх ĕçлесе çемçетнĕ çĕр çинче кăна пĕр пек пысăк тухăçлă тырпул туса илме пулать. Çавăн пек çĕре нумай çул хушши ӳсекен курăксем акнипе хатĕрлеççĕ. Çавăнпа та нумай çул хушши ӳсекен курăксем акса тăвасси Чăваш республикин ялхуçалăхне аталантарса пырас ĕçри пирвайхи черетре тăракан задача пулса тăрать. Çитес çулсенче курăксем акса тумалли лаптăка тăтăшах аслăлатса пымалла, пусуçаврăнăшне çирĕп тытса пымалла. Çакă вăл чи малтанах курăксен вăрлăхĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлеме хушать. Кашни колхоз хăй валли çителĕклĕ чухлĕ вăрлăх туса илме тивĕçлĕ. Сывăх вăхăтрах курăк вăрлăхĕсене çапса, хатĕрлесе хурас пулать, машинăсем тивĕçмесен, алăпа шĕкĕлчес ĕçе те анлăн туса пымалла, курăк вăрлăхĕсене акма юрăхлă кондицие лартмалла тата 1944 çулхи çуркунне вĕсене тĕрĕс акса хăвармалла.

Çитес çуракинче МТС-семпе колхозсен мĕнпур сеялкисемпе туллин усă курмалла тăвас пулать. Районсенчи совет тата çĕрĕç органĕсен руководителĕсен халех кашни колхоз валли ретлĕ сеялкăсем мĕн чухлĕ кирлĕ пулассине шутласа хумалла, сеялкăсем çук колхозсене сеялкăсем ытлашши колхозсенчен илсе пырассине организацилемелле, тырăсене пуринчен ытла ретлĕ майпа акса хăварма тăрăшмалла.

Вăрçа пула ялхуçалăхĕнче ĕç вăйĕ тата туртăм вăйĕ сахалланни машинăпа тракторнăй станцисем умне çĕнĕ задачăсем кăларса тăратрĕ. Малта пыракан МТС-сем вĕсене ăнăçлăн татса параççĕ. Йĕпреç МТС-ĕ, сăмахран, иртнĕ çул тракторсемпе тумалли ĕçсен çулталăкри планне 117 проц., Шăхасан МТС-ĕ — 118,7 процент, Елчĕк МТС-ĕ — 105,3 процент, Комсомольски МТС — 101,5 процент, Вăрнар МТС-ĕ — 100 процент тултарчĕç. Асăннă МТС-сем çак çитĕнӳве тракторсемпе вĕсене кăкарса ĕçлемелли инвентаре иртнĕ çулхи уйхир ĕçĕсене тума тĕплĕн хатĕрлесе çитернипе, механизаторлă кадрсене лайăх хатĕрленипе, машинăсене техника тĕлĕшĕнчен тĕрĕс пăхса тăнипе тата çамрăк кадрсене лайăх пулăшса тăнипе тунă. Анчах та нумай МТС-сем тракторсен паркне уйхир ĕçĕсене тума начар хатĕрленĕ пулнă. Çавна пула машинăсем вара хире тухсан чылай вăхăт хушши ĕçлемесĕр тăчĕç, горючи ытлашши расходланчĕ, çапла вара çав МТС-сем тракторсемпе тумалли ĕçсен планне пурнăçа кĕртмесĕр хăварчĕç. Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă, Пăрачкав тата Хĕрлĕ Чутай МТС-ĕсем, сăмахран, хăйсен планĕсене çурри ытларах çеç пурнăçа кĕртнĕ.

МТС-сен руководителĕсем машинăсемпе тракторсен паркне çуракине вăхăтра тата лайăх хатĕрлесе çитерессишĕн хăйсем ответлă пулса тăнине ăнланса илме тивĕçлĕ. Вĕсен çакна тума шалти мĕнпур ресурсене мобилизацилемелле, машинăсене юсас ĕçе лайăх организацилесе, ăна правительство кăтартнă срок тĕлне туса çитермелле. Юсав ĕçĕн пахалăхĕ çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать.

Оборонăн Государственный Комитечĕ йышăннă тăрăх, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене мĕнле юсанине государство комиссийĕ пăхса тухмалла. Çав комиссире райисполком председателĕ е ВКП(б) райкомĕн секретарĕ (комисси председателĕ пулса), МТС директорĕ, МТС-ри е совхозри старши механик, çавăн пекех тата старши тракторист тăма тивĕçлĕ. Юсанă тракторсене йышăнас ĕçе çакăн пек йĕркелени машинăсене мĕнле юсанишĕн райисполком председателĕсен, ВКП(б) райком секретарĕсен, МТС директорĕсен тата кашни трактористăн ответлăхне ӳстерет.

Тракторсене юсас, запас пайсем çĕнĕрен туса хатĕрлес тата киввисене юсаса çĕнетес ĕçре палăрнă МТС руководителĕсемпе инженерла-техникла работниксене премисем памалла туни МТС-сен ĕçне тĕпренех лайăхлатма пулăшĕ. МТС-сенчи работниксене Горький облаçĕнчи Каменка МТС-ĕн коллективĕ чĕнсе каланине тĕплĕн ăнлантарса памалла, çапла вара МТС-сенче машинăсемпе тракторсен паркне юсас ĕçе ăнăçлăн туса ирттерессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сармалла.

Лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарьне хатĕрлесси çинчен манмалла мар. Çурхи мĕнпур уйхир ĕçĕсен 80 процентне ытла лашасемпе тума лекет. Анчах чылай колхозсенче лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарьне юсас ĕçе халĕ те кирлĕ пек тытăнман-ха. Кӳлмелли хатĕрсемпе сеялкăсене, плугсемпе сӳресене акана тухас умĕн кăна юсас кивĕ йĕркене пуçĕпех пĕтермелле. Тимĕрçĕсем çитмен пирки, вĕсене колхозсем тăрăх çирĕплетсе тухмалла, вĕсене çуракинче кирлĕ ĕç хатĕрсене юсаса пĕтермелли заданисемпе сроксем палăртса памалла. Лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх инвентарьне юсанă çĕре, тимĕрçĕсемпе пĕрлех, мĕнпур машиноведсене тата ĕçрен тушаннă трактористсене те явăçтармалла. Ку ĕçре комсомол организацийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсен çамрăксене тимĕрçĕ ĕçне вĕренме чĕнмелле. Кашни тимĕрçĕ çумне çамрăксенчен çав ĕçе вĕренме 3—5 çын çирĕплетмелле.

Çĕрĕç органĕсен лашапа ĕçлемелли инвентаре мĕнле юсанине куллен тĕрĕслесе тăрас пулать. Агрономсен çав ĕçе пĕтĕм вăя хумалла, юсанă машинăсене хăйсен тĕрĕслесе тухса, вĕсене акт тăрăх йышăнмалла.

Лашасене çуракине хатĕрлес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Çакна шута илес пулать: 1943 çулта кĕрхи çĕртме тумалли плана республика пĕтĕмпе те 65,5 процент кăна тултарнă, хăшпĕр районсенче, сăмахран, Кувакино, Çĕрпӳ, Чкаловски, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Канаш районĕсенче кĕрхи çĕртме тата та сахалтарах тунă. Çавна пула çуртырисем акма çĕре çуркунне нумай сухалама лекет. Çавăнпа та ĕнтĕ, лашасем çурхи йывăр ĕçсене лайăх тӳссе ирттерччĕр тесен, вĕсене çуракине тимлĕн хатĕрлесе çитермелле.

Анчах нумай колхозсен руководителĕсем лашасемшĕн халĕ те-ха сахал тăрăшаççĕ, вĕсене мĕнле пăхса тăрантарнине куллен сăнаса тăмаççĕ, ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулхи майăн 12-мĕшĕнче йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесси çине çиелтен пăхаççĕ.

Колхоз лаши çине тискеррĕн пăхнине халех пĕтермелле, лашасене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтермелле. Мĕнпур кӳлмелли хатĕрсемпе транспорт инвентарьне халех йĕркене кĕртмелле. Кашни лашан хăйне юрăхлă кӳлмелли хатĕрсем пулччăр. Конюхсем улшăнса тăнине чармалла, лашасем пăхакан колхозниксене ĕçшĕн лашасем мĕнлине кура тӳлемелле. Сывăх кунсенчех кашни лашана уйрăм колхозника çирĕплетсе памалла, лашапа çӳрекенсене хăйсем çумне çирĕплетнĕ лашасемпе çӳреме ирĕк паракан удостоверенисем парса хумалла. Пĕтĕ кĕсресене уйрăмах тимлĕн пăхмалла, хăм пăрахни пĕрре те пулмалла мар. СССР Совнаркомĕ 1941 çулхи майăн 29-мĕшĕнче йышăннă нормăсем тăрăх, мĕнпур колхозсенче пĕтĕм лашасен йышĕ валли кирлĕ таран утă уйăрса хумалла, ĕçлекен лашасем валли çураки вăхăтне кирлĕ чухлĕ тĕштырă фуражĕ уйăрса çирĕплетсе хумалла, ăна уйхир ĕçĕсем пуçланиччен расходлама чармалла, апат-çимĕçсене çемçетсе парас ĕçе (ваклассине, вĕри шывпа ислетессине т. ыт. те) организацилемелле.

Лашасем çине ӳкекен ĕç чылай ӳснине кура, хĕсĕр ĕнесемпе вăкăрсене кӳлсе ĕçлеттерессипысăк вырăн йышăнать. Майракаллă шултăра выльăхсемпе пирĕн республикăри чылай колхозсенче ăнăçлăн усă кураççĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх ĕçĕсенче тăтăшах 16 вăкăр ĕçлет. Вĕсемпе хатĕрлев пункчĕсене 560 центнер çĕрулми, 22 центнер тĕштырă турттарнă, выльăх витисем тума вăрмантан 50 кубометр йывăç кӳрсе килнĕ. Çав районти «Комбайн», «Коммунист», Чапаев ячĕпе тăракан тата ытти колхозсенче те вăкăрсемпе ăнăçлăн ĕçлеççĕ. 1944 çулта пирĕн ĕç вăкăрĕсене 20.600 пуç ӳстерсе çитентермелле. Вăкăрсем валли халех кӳмелли хатĕрсем туса хумалла. Вăкăрсене, тислĕк турттарнă çĕрте тата ытти вак-тĕвек ĕçсенче ĕçлеттерсе, ерипен ĕçе вĕрентсе пымалла.

Ялхуçалăхĕнче транспорта тĕрĕс йĕркелени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Транспорт хатĕрĕсене лайăх тытни мĕнпур ĕçсен тухăçлăхне чылай ӳстерме пулăшать. ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком транспортпа ут тавраш́ĕсене çуракине вăхăтра хатĕрлесе çитерме кирли çинчен партипе совет организацийĕсене пĕрре мар кăтартса панă ĕнтĕ. Анчах та транспорт инвентарьне юсаса хатĕрлес ĕç чылай колхозсенче çителĕксĕр пырать. Çак ĕçе Шупашкар, Иншей, Октябрьски, Çĕмĕрле районĕсенче уйрăмах япăх йĕркеленĕ. Çав районсенчи колхозсенче транспорт инвентарĕпе кӳлмелли хатĕрсем лашасене 60—70 процент чухлĕ, хăшпĕр колхозсенче вара—45—50 процент чухлĕ кăна тивĕçеççĕ. Ĕçлекен лашасен 30 процентĕ ытла вара çавна пула ĕçре усă курмасăр тăраççĕ.

Транспорт инвентарьне пур лашасене те çитмелĕх хатĕрлесе хурас тесен, ăна халех колхоз картишне пуçтармалла, ăна пăхса усрама ответлă çынсем уйăрмалла, кӳлмелли хатĕрсемпе урапа-çунасем тата ытти те юсаса хума колхозсенче ятарласа бригадăсем тумалла. Колхоз председателĕсемпе бригадирсен транспорт инвентарĕпе кӳлмелли хатĕрсем мĕнлине тăтăшах хăйсен тĕрĕслесе тăмалла. Инвентарьпе кӳлмелли хатĕрсене тирпейсĕр тыткалакансене, вĕсене çĕмĕрекенсене çийĕнчех хыттăн ответ тыттарас пулать.

Республикăри малта пыракан колхозсем хăйсен хуçалăхĕсенче лайăх инвентарь пултăр тесе мĕн кирлине пурне те тăваççĕ. Сăмахран, Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозра ут тавраш́ĕсене лаша витисенчех юсама ятарласа çынсем уйăрнă. Кунта мĕнпур транспорт инвентарьне вырăнтах тăваççĕ. Кун пек тĕслĕхсене сахал мар илсе кăтартма пулать. Çак ĕçе пур колхозсенче те йĕркелеме май пур. Колхозсене транспорт инвентарĕ туса парас тĕлĕшпе Наркомместпромпа Наркомлес тата промкооперации предприятийĕсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, çунасемпе урапасем, лĕкĕсемпе кӳлмелли ытти хатĕрсем туса хатĕрлес тĕлĕшпе план тунă. Анчах та çав организацисен руководителĕсем парти Обкомĕпе республика Совнаркомĕн заданине пурнăçлас тĕлĕшпе питех те сӳрĕк ĕçлеççĕ.

Чылай колхозсенче тырпул тыткаламалли михĕсем çитменни палăрать. Çав вăхăтрах колхоз правленийĕсем мĕнпур йĕтĕн-кантăра ĕçкунĕсем тăрăх валеçеççĕ, колхоз валли михĕсемпе шăналăксем тата вĕренсем хатĕрлеме сӳс-хантăр пачах та хăвармаççĕ, кайран вара колхозсем, нумай укçа-тенкĕ тăккаласа, çав япаласене урăх çĕртен илеççĕ. Райисполкомсемпе парти райкомĕсен çак ĕç çине çаврăнса пăхмалла, вĕсен колхозсенче михĕсемпе шăналăксем, вĕренсем колхоз сӳс-хантăрĕнченех туса хатĕрлес ĕçе халех йĕркелес пулать.

Вăрçа пула колхозсемпе совхозсенчи тата МТС-сенчи ертсе пыракан кадрсен составĕ чылай улшăнчĕ. Ертсе пырас ĕçе çĕнĕ çынсем, уйрăмах хĕрарăмсем, нумай хутшăнчĕç. Вĕсен чылайĕшĕсен ĕç опычĕ çук, вĕсене ĕçре пысăк пулăшу памалла. Государствăн, колхозсемпе колхозниксен пурнăç интересĕсем колхоз руководителĕсен пĕлӳлĕхĕпе квалификацине тăтăшах ӳстерсе пыма хушаççĕ. Çакă паллă: колхозсен пурнăçĕнчи нумай ĕçсем вĕсене кам ертсе пынинчен килеççĕ. Колхоза артель ĕçĕшĕн чĕререн çунакан, çынсене организацилеме пĕлекен пуçарулă çын ертсе пырать пулсан, çавăн пек колхозра вара пур ĕçсем те лайăх пыраççĕ. Çавăн пек колхоз фронтпа çĕршыва нумай апат-çимĕç парать, государство умĕнчи парăмĕсене вăхăтра татать, обществăллă хуçалăха тата ĕçкунĕсен тупăшне тăтăшах ӳстерсе пырать. Пачах та урăхла: колхоза массăсене йĕркелеме, вĕсене хăй хыççăн ертсе кайма пĕлмен, сӳрĕк çын ертсе пырать пулсан, çавăн пек колхоз паян-и ыран-и кая юлакан колхоз пулса тăрать.

Иртнĕ çулта колхоз кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă. Çулталăк хушшинче 952 колхоз председательне, 1.929 бригадира, 120 счетовода тепĕр хут вĕрентсе кăларнă. 2.647 çынна трактористсемпе комбайнерсем тата ытти тĕрлĕ механизаторла кадрсем пулма вĕрентнĕ, массăллă квалификацин кадрĕсене 8.800 çынна яхăн вĕрентсе хатĕрленĕ.

Колхоз кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе кăçалхи хĕлле пирĕн тата та ытларах ĕçлемелле пулать. Колхозсене ертсе пыракан мĕнпур работниксене, колхоз председателĕсенчен пуçласа звеньевойсем патне çитиччен, пурне те кĕске вăхăтлăх курссем витĕр кăлармалла. Ĕçе çапла йĕркелемелле: колхоз председателĕ, пуринчен малтан, курсра организаторла ĕçĕн хăнăхăвне тата ялхуçалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе лайăх пĕлӳ тупнă, артелĕн пысăк хуçалăхне ертсе пыма вĕренсе çиттĕр, артеле ертсе пырас ĕçĕн техникине алла илтĕр. Вăл государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли вăйсемпе йĕркесене тата сроксене пĕлтĕр, колхозпа МТС хушшинчи çыхăнăва тĕплĕн ăнланса илтĕр, производствăпа ĕç планĕсене, приходпа расход сметисене тĕрĕс тума вĕренсе çиттĕр, учетпа отчет ĕçĕсемпе çителĕклĕ таран паллаштăр.

Кадрсене тăтăшах хатĕрлесе пымалла, вĕренекенсен пĕлӳлĕхне майĕпен аслăлатса, лайăхлатса пымалла. Пур колхозсем те лайăх ĕçлеччĕр тесен, темиçе пин колхозникпе колхозницăна, сухаçăсемпе акаçăсене, яровизаторсемпе химизаторсене, техникăллă тĕрлĕ йышши культурăсем тĕлĕшпе ĕçлекен звеньевойсене вĕрентсе хатĕрлемелле, вĕсен ĕçри квалификацине ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пымалла, вĕсене социализмлă çĕрĕç мастерĕсен опычĕпе хĕçпăшаллантармалла.

Совет халăхĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç Отечественнăй аслă вăрçă туса пынă кунсенче колхозниксемпе колхозницăсем политикăллă пурнăçри событисемпе, пирĕн çĕршывăн пĕтĕм тĕнчери ларутăрăвĕпе ытларах интересленме пуçларĕç. Колхоз хресченĕсем Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи событисене тимлĕн сăнаса тăраççĕ, паттăр Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерӳсем çинчен калакан хыпарсене пĕтĕм чун-чĕререн хавасланса кĕтсе илеççĕ.

Парти организацийĕсен, коммунистсемпе комсомолецсен тата ялти интеллигенцин задачи—колхозниксен çав политикăллă ыйтăвĕсене тивĕçтересе пырасси, ялта массăллă политикăллă ĕçе ывăнма пĕлмесĕр туса пырасси, халăха 1944 çулхи çуракине вăхăтра тата лайăх хатĕрленсе çитме, ăна ăнăçлăн туса ирттерме çĕклесси пулса тăрать. Массăллă-агитацилле ĕçĕн пур майĕсемпе те (хаçатсемпе радио, докладсемпе лекцисем, калаçусем, стена хаçачĕсемпе боевой листоксем т. ыт. те) анлăн усă курмалла. Районсенчи ертсе пыракан работниксен, кашни уйăхра е уйăх çурăран кая юлмасăр, кашни колхозра политикăллă докладсем туса парас пулать.

Колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелес тĕлĕшпе вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем, библиотекăсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен ĕçне тĕпренех лайăхлатмалла, вĕсене çуракине хатĕрленес хĕрӳллĕ ĕçе явăçтармалла.

Ял-овечĕсем умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсем çуракине хатĕрленес ĕç мĕнле пынине тăтăшах сăнаса тăма тивĕçлĕ, вĕсен колхозсен ĕçне таранăн хутшăнмалла, колхозсенчи çитменлĕхсене вăхăтра палăртса, вĕсене пĕтерме колхозсене ĕçлĕн пулăшмалла.

1943-мĕш ялхуçалăх çулĕнче пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Хальхи задача ĕнтĕ — çитес çуракине кăтартуллăн хатĕрленесси, ăна пур енчен те лайăх кĕтсе илесси, 1944 çулта татах та вăйлăрах тырпул, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем туса илесси пулса тăрать.

Уйхирте юр тытаççĕ

КАЛИНИНО. Коммунист М. Игнатьев юлташ председатель пулса ĕçлекен «Социализм çулĕпе» колхоз членĕсем пĕтĕм вăя çуракине хатĕрленес çĕре хураççĕ. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех ялхуçалăх машинисене юсаса çитернĕ, кирлĕ таран вăрлăх сортланă, хире 500 лав тислĕк кăларнă, 60 гектар çинче юр тытнă. К. Якимова, К. Иванова, Е. Лукина колхозницăсем кунне 2-шер гектар вырăнне 4-шар гектар çинче юр тытаççĕ

Колхозра агротехникăна вĕренмелли кружок организациленĕ. Унта 30 çын çӳрет. Занятисем план тăрăх, йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

* * *

Советски районри нумай колхозсем юр тытма пуçларĕç. Исмендерти «Радио» колхоз 95 гектар, «Октябрь» колхоз 90 гектар, «Клевер» колхоз 75 гектар тата Сталин ячĕпе тăракан колхоз 120 гектар çинче юр тытнă. Колхозниксемпе колхозницăсем юр тытнă çĕрте ăмăртса ĕçлеççĕ.

Н. ПАХОМОВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00509

Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59×42 п. л Тираж 14.400 экз